27-мӗш çул тухать. Хакӗ 20 пус.

1944 ИЮЛЬ 2 ВЫРСАРНИКУН 130(6625) №

Чӑваш Коммуни

Пӗтӗм тӗнчери пролетарисем, пӗрлешӗр!

ВКП(б) ОБКОМӖПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧӖН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧӖН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧӖН ХАÇАЧӖ

ВЕРХОВНЫЙ ГЛАВНОКОМАНДУЮЩИН ПРИКАЗӖ

Арми генералне ЧЕРНЯХОВСКИЕ

БЕЛОРУССИРИ 3-мӗш фронтӑн çарӗсем, ӑнӑçлӑ наступление вӑйлатса пырса, БЕРЕЗИНА юханшывӗ урлӑ 110 километр тӑршшӗ фронтра каçнӑ та паян, июлӗн 1-мӗшӗнче, çулйӗрсен пысӑк узелне БОРИСОВ хулине, нимӗçсен МИНСК патне пымалли вырӑнсенчи оборонин питех те паха пунктне штурмласа йышӑнса илнӗ.

БЕРЕЗИНА юханшывӗ урлӑ каçнӑ чухнехи тата БОРИСОВ хулине туртса илессишӗн пынӑ çапӑçусенче ГАЛИЦКИЙ генерал-полковникӑн, ГЛАГОЛЕВ генерал-лейтенантӑн, КРЫЛОВ генерал-лейтенантӑн, ЗАВАДОВСКИЙ генерал-майорӑн, КОШЕВОЙ генерал-лейтенантӑн, ПРОВАЛОВ генерал-майорӑн, МАСЛОВ генерал-майорӑн, ЧЕРНОВ генерал-майорӑн, БЕРЕСТОВ генерал-майорӑн, СТРИЖЕНКО генерал-майорӑн, ГЛАДЫШЕВ генерал-майорӑн, КАЗАРЯН генерал-майорӑн, АЛЕКСЕЕНКО генерал-майорӑн, ВОЛКОВ полковникӑн, ТОЛСТИКОВ полковникӑн, КОВАЛЕВСКИЙ полковникӑн, ПОЛЕВИК полковникӑн, КОВТУНОВ полковникӑн, КЛИМАХИН полковникӑн, ДОНЕЦ полковникӑн çарӗсем; ОСЛИКОВСКИЙ генерал-лейтенантӑн кавалерисчӗсем; артиллери генерал-майорӗн СЕМИНӐН, артиллери генерал-лейтенанчӗн САЛИЧКӐН, артиллери генерал-майорӗн САЗОНОВӐН, ЦАРЬКОВ полковникӑн, ГЛУШКОВ полковникӑн, МИТЮРОВ полковникӑн, ДЕМЯНОВСКИЙ полковникӑн, КАМИСОВ полковникӑн, ТОМИЛИН полковникӑн, БОТВИННИН полковникӑн, КИЙ полковникӑн, ФЕДОТОВ полковникӑн, ХАСИН полковникӑн, БАЖУТОВ полковникӑн, ЧЕРКАСОВ полковникӑн, ТИТОВ подполковникӑн, СОТСКОВ подполковникӑн, ВЫБОРОВ подполковникӑн, КОЗИН подполковникӑн, МОИСЕЕНКО подполковникӑн, УВАРОВ подполковникӑн артиллерисчӗсем; бронетанковӑй çарсен маршалӗн РОТМИСТРОВӐН, танковӑй çарсен генерал-лейтенанчӗн ОБУХОВӐН, танковӑй çарсен генерал-майорӗн ВОВЧЕНКӐН, танковӑй çарсен генерал-майорӗн ФОМИНЫХӐН, танковӑй çарсен генерал-майорӗн АСЛАНОВӐН, КРЕМЕР полковникӑн танкисчӗсем; авиаци генерал-лейтенанчӗн БЕЛЕЦКИЙӖН, авиаци генерал-лейтенанчӗн УШАКОВӐН, авиаци генерал-майорӗн АНДРЕЕВӐН, ПРУТКОВ полковникӑн летчикӗсем; инженернӑй çарсен генерал-майорӗн ЗВЕРЕВӐН, ХМЫРОВ полковникӑн, ШЕЛО полковникӑн, ПРОНЕВИЧ полковникӑн, ЧИЖ подполковникӑн, ТАНХИЛЕВИЧ майорӑн, САНЧИН майорӑн, МАЛАХОВ майорӑн, СЕМЕНОВ майорӑн саперӗсем тата ДАВИДЕНКО полковникӑн связисчӗсем уйрӑмах чапа тухнӑ.

Тунӑ ӗçсенчен палӑрнӑ чапа тухнӑ тесе, БЕРЕЗИНА юханшывӗ урлӑ каçнӑ чухнехи тата БОРИСОВ хулине илессишӗн пынӑ çапӑçусенче уйрӑмах палӑрнӑ соединенисемпе чаçсене «БОРИСОВСКИ» тесе ят пама тата орденсемпе наградалама тӑратас.

Паян, июлӗн 1-мӗшӗнче, 22 сехетре пирӗн Тӑван çӗршывӑн столици МУСКАВ, ирӗк çирӗм тӑватӑ тупӑпа çирӗм хут пӗр харӑс персе, Белоруссири 3-мӗш фронтӑн паттӑр çарӗсене, БЕРЕЗИНА юханшывӗ урлӑ каçнӑскерсене тата БОРИСОВ хулине ирӗке кӑларнӑскерсене, Тӑван çӗршыв ячӗпе салют парать.

Питех те чаплӑ çапӑçнӑшӑн Эсир ертсе пыракан çарсене, БЕРЕЗИНА урлӑ каçнӑ чухнехи тата БОРИСОВ хулине ирӗке кӑларассишӗн пынӑ çапӑçусенче пулнӑскерсене, ТАВ ТӐВАТӐП.

Хамӑрӑн Тӑван çӗршывӑн ирӗклӗхӗпе никама пӑхӑнманлӑхӗшӗн пыракан çапӑçусенче вилнӗ геройсене ӗмӗр-ӗмӗр мухтав!

Нимӗç захватчикӗсене — вилӗм!

Верховный Главнокомандующи
Совет Союзӗн Маршалӗ И. СТАЛИН.

1944 çулхи июлӗн 1-мӗшӗ.

Совет Информаци Бюровӗнчен

ИЮЛӖН 1-МӖШӖНЧИ ОПЕРАТИВНӐЙ СВОДКА

Июлӗн 1-мӗшӗнче Онега тата Ладога кӳллисем хушшинче пирӗн войскӑсем малалла наступлени туса пынӑ, çав çапӑçусем хыççӑн Карело-Финн ССР-ӗнчи ПРЯЖА ятлӑ район центрне туртса илнӗ, çавӑн пекех тата халӑх пурӑнакан ытти 30 пункта ытла туртса илнӗ, çав шутра — МАНГА, ПАНИЛО, БОЛЬШИЕ ГОРЫ, КАВГОЗЕРО, КОВАРНО, МАНСИЛА, ПОГРАНИЧНЫЙ КОНДУШ.

ПОЛОЦК енче пирӗн çарсем çапӑçса малалла куçса пынӑ, халӑх пурӑнакан 150 пункта ытла туртса илнӗ, вӗсен шутӗнче — халӑх пурӑнакан пысӑк пункчӗсем НАЗИМИРОВО, ЕВНИНО, ТРОСНИЦА (ПОЛОЦКРАН 5 километр хӗвелтухӑçнерехре), СЕМЕНЕЦ, РАКОМСА, ПОЛОВИНКИ, ГЕРМАНОВИЧИ, ЛУЖКИ, ПШЕВУЗ.

БЕЛОРУССИРИ 3-мӗш фронтӑн çарӗсем, ӑнӑçлӑ наступлени вӑйлатса пырса, БЕРЕЗИНА юханшывӗ урлӑ 110 километр тӑршшӗ фронтра каçнӑ та паян, июлӗн 1-мӗшӗнче, çулйӗрсен пысӑк узелне БОРИСОВ хулине штурмласа туртса илнӗ. Çавӑн пекех тата халӑх пурӑнакан ытти 150 пункта ытла çапӑçса туртса илнӗ, çав шутра — Минск облаçӗнчи район центрӗ БЕГОМЛЬ хули, ПЛЕЩЕНИЦЫ хули тата халӑх пурӑнакан пысӑк пункчӗсем БЕРЕСНЕВКА, БУДИЛОВКА, БРУСОВИНКИ, ЛИПКИ, ЗЕМБИН, ЧЕРВОНАЯ РУДНЯ, СТРУПЕНЬ, ВЕРЕСКИ, НОВОСЕЛКИ, ЧЕРНЯВКА.

МОГИЛЕВ хулинчен хӗвеланӑçнерехре БЕЛОРУССИРИ 2-мӗш фронтӑн çарӗсем, малалла наступлени туса пырса, халӑх пурӑнакан 50 пункта ытла çапӑçса илнӗ, вӗсен шутӗнче — халӑх пурӑнакан пысӑк пункчӗсем НИКОЛАЕВКА, ШЕПЕЛЕВИЧИ, ЛЕСНОВИЧИ, ЖУРОВКА, ВАСИЛЕВИЩИНА, А. ПОГОСТ, ЛЕШНИЦА. Пирӗн çарсем БЕРЕЗИНА хули патӗнче БЕРЕЗИНА шывӗ урлӑ каçмалли кӗперсем патне çитсе тухнӑ.

БОБРУЙСК хулинчен çурçӗр-хӗвеланӑçнерехре тата хӗвеланӑçнерехре БЕЛОРУССИРИ 1-мӗш фронтӑн çарӗсем, ӑнӑçлӑ наступлени вӑйлатса пырса, Минск облаçӗнчи район центрне КОПЫЛЬ хулине, КРАСНАЯ СЛОБОДА, ГРЕСК хулисене туртса илнӗ, çавӑн пекех тата халӑх пурӑнакан ытти 150 пункта ытла туртса илнӗ, вӗсен шутӗнче — халӑх пурӑнакан пысӑк пункчӗсем НЕГОНИЧИ, НОВАЯ НИВА, ВЕЛИКОПОЛЬЕ, НОВЫЕ ЛЯДЫ, СТАРЫЕ ЛЯДЫ, ОЧИЖА, ГРОДЗЯНКА, ШИШИЦЫ, МАШИЦЫ, ЧИКОВКА тата ГРОДЗЯНКА чугун çул станцийӗ.

Июнӗн 30-мӗшӗнче БЕЛОРУССИРИ 1-мӗш фронтӑн çарӗсем нимӗçсен 12.000 салтакӗпе офицерне тыткӑна илнӗ. Тыткӑна илнисем хушшинче — пехотнӑй дивизин командирӗ ГЕЙНЕ генерал-лейтенант тата Бобруйск хулин коменданчӗ ГАМАН генерал-майор пур. Çапла ӗнтӗ, БЕЛОРУССИРИ 1-мӗш фронтӑн çарӗсем тыткӑна илнӗ нимӗç салтакӗсемпе офицерӗсен хисепӗ июнӗн 30-мӗшӗ вӗçленнӗ тӗле 35.680 çынна çитнӗ.

Фронтӑн ытти участокӗсенче палли улшӑнусемех пулман.

Июнӗн 30-мӗшӗнче пирӗн çарсем мӗн пур фронтсенче нимӗçсен 51 танкне пере çӗмӗрнӗ е пӗтерсе тӑкнӑ. Сывлӑшри çапӑçусенче тата зенитнӑй артиллери тӑшманӑн 46 самолетне ӳкернӗ.

СССР Совнаркомӗнче

СССР Совнаркомӗ сумӗнче тӗн ыйтӑвӗсем тӗлӗшпе ӗçлекен Совет тӑвасси çинчен

СССР Союзӗн Халӑх Комиссарӗсен Совечӗ йышӑннӑ тӑрӑх, СССР Совнаркомӗ сумӗнче тӗн ыйтӑвӗсем тӗлӗшпе ӗçлекен Совет тунӑ. Çав Советӑн ӗçӗ — СССР Правительстви тӗн пӗрлешӗвӗсен [illegible] ыйтӑвӗсене [illegible] ӗçсен руководительӗсем хушшинчи çыхӑнӑва тытса пыни, çав тӗлӗшпе СССР Правительстви тата [illegible] лое пырассипе пулать.

СССР Совнаркомӗ сумӗнчи тӗн ыйтӑвӗсем тӗлӗшпе ӗçлекен Советӑн председательне И. В. Полянский юлташа лартнӑ. (ТАСС).

Тӑшман тылӗнче киноаппаратпа

Гомель хулине 6 уйӑх хушши тӑшман тытса тӑнӑ вӑхӑтра пирӗн киноператорсен бригади тӑшман тылӗнче [illegible] киноаппаратпа [illegible] партизансене [illegible] хайхи [illegible] киноматериал [illegible].

Киноператорсем илсе килнӗ материала Белоруссия хӑлхи [illegible] кинохроники [illegible] пысӑк фильма кӗртессӗ. (ТАСС).

Совет Информаци Бюровӗнчен

ИЮНӖН 30-МӖШӖНЧИ ОПЕРАТИВНӐЙ СВОДКА

Июнӗн 30-мӗшӗнче ОНЕГА кӳллипе ЛАДОГА кӳлли хушшинче пирӗн çарсем, тӑшман хирӗç тӑнине тата унӑн вӑрман сулӑсемпе кӳлӗсем хушшинчи инженерла чӑрмавӗсене çӗнтерсе пырса, малалла наступлени туса пынӑ, халӑх пурӑнакан 40 пункта ытла тытса илнӗ, çав шутра — СВЯТОЗЕРО, ВАГОЗЕРО, ВОРОНОВА-СЕЛЬГА, БЕРЕЗОВЫЙ-НАВОЛОК, МАТЧОЗЕРО, ВЕРКИЛЬ, ВАРЛОВ-ЛЕС, НИНИ-СЕЛЬГА, СОРБОЛА ятлӑ ялсем.

ВЫБОРГ хулинчен çурçӗр-хӗвелтухӑçнерехре тата çурçӗртерехре пирӗн çарсем финсен МЯКЕЛЯ, ИХАНТАЛА, КАРИСАЛМИ, НЯТЯЛЯ ятлӑ опорнӑй пункчӗсене тата КАРИСАЛМИ ятлӑ чугун çул станцине тытса илнӗ.

ПОЛОЦК енче пирӗн çарсем, наступлени туса пырса, Вилейка облаçӗнчи район центрне ДИСНА хулине тытса илнӗ, çавӑн пекех тата халӑх пурӑнакан ытти 100 пункта ытла йышӑннӑ, çав шутра — КОТЛЯНЫ, ПУСТОШИ, ЕЛОВИНИ, БОГУШЕВО, ШЕНДЕЛЫ, БОБЫНИЧИ, ПРОЗОРОКИ, ЧЕШКИ, ЗАУЛЕК ятлӑ пысӑк ялсем тата ГОРЯНЫ, ГОРЧАКИ, ОРЕХОВНО, ЗАГАЙЕ, ПОЛЕВАЧЕ ятлӑ чугун çул станцийӗсем.

МИНСК енче пирӗн çарсем БОРИСОВ хулинчен çурçӗртерехре анлӑ фронтра БЕРЕЗИНА шывӗ урлӑ каçнӑ та çав шывран хӗвеланӑçнелле 30 километр таран кайнӑ. БОРИСОВ хулинчен кӑнтӑр-хӗвелтухӑçнерехре пирӗн çарсем БЕРЕЗИНА шывӗ патне çитнӗ. Пӗр кун хушшинче çав енче пирӗн çарсем халӑх пурӑнакан 50 пункта ытла тытса илнӗ, çав шутра — ЛОШНИЦА, ВЫДРИЦА, МАЛЫЕ НЕГНОВИЧИ, БОЛЬШИЕ НЕГНОВИЧИ, ВЕЛЯТИЧИ, НЕМОНИЦА, БОЛЬШИЕ УХОЛОДЫ, ЛЕОНОВО ятлӑ пысӑк ялсем тата ПРИЯМИНО ятлӑ чугун çул станцийӗ. Пирӗн çарсем БОРИСОВ хулине вӑркӑнса кӗрсе кайнӑ та халӗ урамӗсенче çапӑçаççӗ.

МОГИЛЕВ хулинчен хӗвеланӑçнерехре пирӗн çарсем ДРУТЬ шывӗ урлӑ каçнӑ та тӑшманпа çапӑçса малалла куçса пынӑ, халӑх пурӑнакан 80 пункта ытла тытса илнӗ, çав шутра — МИХЕЙКОВО, СТАХОВО, ЭСЬМОНЫ, СТАРОСЕЛЬЕ, СТУДЕНКА, ЗАГАТЬЕ, СУША ятлӑ пунктсем тата ДРУТЬ, МИЛОЕ, ВОНИЧИ, СТОЯЛОВО ятлӑ чугун çул станцийӗсем.

БОБРУЙСК хулинчен çурçӗр-хӗвеланӑçнерехре тата хӗвеланӑçнерехре пирӗн çарсем, ӑнӑçлӑ наступлени туса пырса, Минск облаçӗнчи район центрӗсене — СЛУЦК хулипе пысӑк чугун çул станцине тата ЛЮБАНЬ хулине туртса илнӗ, çавӑн пекех тата халӑх пурӑнакан ытти 200 пункта ытла йышӑннӑ, çав шутра — БОГУШЕВИЧИ, СТАРЫЕ РЕЧКИ, КАМЕНИЧИ, ВЯЗОВНИЦА, ТАЛЬНА, ЛЕВКИ, ЗАЛУЖЬЕ, НОВОСЕЛКИ, ВЕСЕЯ, УРЕЧЬЕ, ПОГОСТ ятлӑ пысӑк ялсем тата ВЕРЕЙЦЫ, ТАЛЬКА, ФАЛИЧИ, ВЕРХУТИНА, УРЕЧЬЕ, ПАВУСТОШ, НЕКРАШИ ятлӑ чугун çул станцийӗсем.

ПРИПЯТЬ шывӗн вӑтам тӑрӑхӗ районӗнче пирӗн çарсем наступлени туса пынӑ, Полесье облаçӗнчи район центрӗсене ПЕТРИКОВ хулипе КОПАТКЕВИЧИ хулине туртса илнӗ, çавӑн пекех тата халӑх пурӑнакан ытти 20 пункта ытла йышӑннӑ, çав шутра — КОШЕВИЧИ, ЧЕЛЮЩЕВИЧИ, ИВАШКОВИЧИ, КОНКОВИЧИ, БЕЛАНОВИЧИ ятлӑ ялсем тата СЕКЕРИЧИ, ПТИЧЬ ятлӑ чугун çул станцийӗсем.

Фронтӑн ытти участокӗсенче паллӑ улшӑнусемех пулман.

Июнӗн 29-мӗшӗнче мӗнпур фронтсенче пирӗн çарсем нимӗçсен 137 танкне çӗмӗрсе тӑкнӑ. Сывлӑшри çапӑçусенче тата зенитнӑй артиллери тӑшманӑн 29 самолетне персе ӳкернӗ.

☆ ☆ ☆

Пирӗн авиаци июнӗн 30-мӗшӗ ыран тенӗ чух çӗрле Барановичи, Минск, Лунинец, Молодечно, Полоцк чугун çул узелӗсене пыра-пыра çапнӑ. Бомбӑсем пӑрахнине пула çав узелсенче вӑйлӑ пушарсем тухнӑ, вӑйлӑ взрывсем пулнӑ.

* * *

Онега кӳллине Ладога кӳлли хушшинче пӗр чаçри подразделенисем Пуску-Сельга районӗнче финсен 45-мӗш пехотнӑй полкӗн батальонне пӗтерсе тӑкнӑ. 6 тупӑ, 12 миномет, 18 пулемет, радиостанци тата боеприпаспа апат-çимӗçӗн 4 складне тытса илнӗ. Тыткӑна илнисем пур.

* * *

Полоцк хули енче пирӗн çарсем, çав тери хӑвӑрт наступлени туса, Полоцк хулинчен 35 километр хӗвеланӑçнерехре ларакан Дисна хулине туртса илнӗ. Трофейӑсем нумай тытса илнӗ. Лепель хулинчен çурçӗр-хӗвеланӑçнерехре нимӗçсем çӗнӗ вӑйсем илсе пырса, 15 хутчен контратака тунӑ. Совет пехотинецӗсемпе танкисчӗсем, артиллери пулӑшнипе, тӑшман контратакисене ӑнӑçлӑ сирсе янӑ, вара, малалла куçса, халӑх пурӑнакан чылай пунктсене туртса илнӗ. 1.500 нимӗç салтакӗпе офицерне çити вӗлерсе пӗтернӗ, 10 танк, хӑй тӗллӗн çӳрекен 4 тупӑ тата 25 хир туппи пӗтерсе тӑкнӑ. Совет летчикӗсем, бомбӑсем пӑрахса тата штурмласа, 120 автомашина, 50 лав, хӑй тӗллӗн çӳрекен 3 тупӑ, пӗр паровоз тата 70 вагон пӗтерсе тӑкнӑ. Артиллерипе минометсен 20 батарейине пусарса лартнӑ. Сывлӑшри çапӑçусенче совет истребителӗсем нимӗçсен 14 самолетне персе ӳкернӗ.

* * *

Минск хули енче пирӗн çарсем нимӗçсем хирӗç тӑнине çӗмӗрсе тӑкнӑ та Березина шывӗ урлӑ каçнӑ. Тӑшман хӑйӗн çӗмӗрсе тӑкнӑ дивизийӗсене çӗнӗ вӑйсем — эсэсовецсемпе охраннӑй чаçсем — хушса панӑ, çапла вӑл пирӗн çарсен наступленине чарса лартма хӑтланнӑ. Совет çарӗсем тӑшмана йывӑр çухатусем кӳреççӗ, ӑна хӗвеланӑçнелле ывӑта-ывӑта яраççӗ. Пирӗн çарсем Борисов хулине вӑркӑнса кӗрсе кайнӑ. Хула урамӗсенче хаяр çапӑçусем пыраççӗ. Пӗр участокра совет танкисчӗсем нимӗçсен 256-мӗш пехотнӑй дивизийӗн уйрӑм батальонне пӗтерсе тӑкнӑ. Батальон командирӗ Карл Раух капитан хӑйӗн тӑрса юлнӑ салтакӗсен ушкӑнӗпе пӗрле тыткӑна парӑннӑ.

* * *

Могилев хулинчен хӗвеланӑçнерехре, Рагозна ялӗ районӗнче, тӑшман пехоти, хӑй тӗллӗн çӳрекен тупӑсем пулӑшнипе, контратака пуçласа янӑ. Пирӗн чаçсем, çав тери хӑвӑртӑн флангсенчен пырса çапса, нимӗç пехотин полкне вӗлерсе пӗтернӗ тата хӑй тӗллӗн çӳрекен 9 тупӑ, 700 автомашина ытла пӗтерсе тӑкнӑ. Хӑй тӗллӗн çӳрекен 19 тупӑ (вӗсенчен виççӗшӗ «Фердинанд» йышшисем) тата ытти трофейӑсем те тытса илнӗ. 340 нимӗç салтакӗпе офицерне тыткӑна илнӗ.

Пирӗн авиаци пӗр çӗре пухӑнса тӑнӑ тӑшман çарӗсене пыра-пыра çапнӑ. Нимӗçсен 3 танкне, 110 автомашинине, 3 бензозаправщикне, 10 лавне тата 4 туппине пӗтерсе тӑкнӑ, тӑшман пехотин темиçе ротине сапаласа янӑ, çавӑн чухне нимӗçсене йывӑр çухатусем тӳстернӗ.

* * *

Бобруйск хулинчен çурçӗр-хӗвеланӑçнерехре тата хӗвеланӑçнерехре пирӗн çарсем çаплах ӑнӑçлӑ наступлени туса пынӑ. Совет çарӗсем тӑшманӑн Случь шывӗ тӑрӑх пыракан оборонине çӗмӗрсе тӑкнӑ та, каялла чакакан нимӗçсене таптаса пырса, Слуцк хулине вӑркӑнса кӗрсе кайнӑ. Тӑшман гарнизонӗ юлашки чун-хавалӗпе хирӗç тӑнӑ, анчах та ӑна аркатса тӑкнӑ. Пирӗн Слуцк хулине туртса илнӗ чаçсем хӗвеланӑçнелле васкаса чакакан тӑшмана хӑваласа пыраççӗ. Трофейӑсем нумай тытса илнӗ. Тыткӑна нумай илнӗ.

* * *

Пирӗн Çурçӗр флочӗн авиацийӗ Çурçӗр Норвегири Киркенес портне тапӑнни çинчен тата пирӗн авиаципе торпеда катерӗсем тӑшманӑн Петсамо портне пыракан суднисене пыра-пыра çапни çинчен тӗплӗнтерех пӗлтерекен даннӑйсем илнӗ.

Ӗнер — 4 транспорта путарнӑ, тенӗччӗ, тӗрӗслесе илсен, пӗтӗмӗшпе 40.000 тонна тиякан 7 транспорта путарнӑ, унсӑр пуçне тата пӗр танкера, 2 тральщика, хуралта çӳрекен 2 катера тата тепӗр торпеда катерне путарнӑ.

* * *

Львов облаçӗнче кӗрешекен партизансен отрячӗ пӗр чугун çул станцине ӑнӑçлӑн тапӑннӑ. Хуралти салтаксене пӗтерсе тӑкса, партизансем боеприпас эшелонне сирпӗнтерсе янӑ тата станцин çулйӗр хуçалӑхне аркатса тухнӑ.

* * *

Нимӗçсен 12-мӗш пехотнӑй дивизийӗн Могилев хулинче тыткӑна илнӗ командирӗ Бамлер генерал-лейтенант çапла каласа панӑ: «Мана нимӗçсен Норвегири оккупаци çарӗн штаб начальникӗ пулма лартнӑччӗ. Ултӑ эрне çитет ӗнтӗ, мана Совет Союзӗпе Германи фронтне куçарчӗç те 12-мӗш дивизин командирӗ пулма лартрӗç. Нимӗçсен Могилев хулинчи гарнизонӗ Гитлертан приказ илчӗ. Çав приказ тӑрӑх, нимӗçсен темӗн чухлӗ сын пӗтсен те хулана вырӑссене памалла марччӗ. Анчах та вырӑссен çав тери хӑвӑрт тата хӑватлӑ наступленийӗ пирӗн шухӑшсемпе шутсене йӑлтах пӑтраштарса ячӗ. Вырӑссен наступленийӗ пире хӑратса, тӗлӗнтерсе ячӗ. Пирӗн йывӑр çухатусем тӳсмелле пулчӗ. Дивизири 8.000 салтакран 3.000 çынтан ытла юлмарӗ. Вырӑссем питӗ нумай трофейӑсем тытса илчӗç, вӑл шутра 12-мӗш артиллери полкӗн пӗтӗм пурлӑхне тытса илчӗç».

Кӑçалхи июнӗн 24-мӗшӗпе 29-мӗшӗ хушшинче Белоруссири 1-мӗшпе 2-мӗш фронтсен çарӗсем наступлени тунӑ вӑхӑтра нимӗçсем тӳснӗ çухатусем тата пирӗн çарсем тытса илнӗ трофейӑсем

БЕЛОРУССИРИ 1-мӗш фронт çарӗсем, Совет Союзӗн Маршалӗ РОКОССОВСКИЙ командир пулса ертсе пынипе, кӑçалхи июнӗн 24-мӗшӗпе 29-мӗшӗ хушшинчи наступленилле çапӑçусенче тӑшмана çынсемпе техника тӗлӗшӗнчен çакӑн пек çухатусем кӳнӗ:

ПӖТЕРСЕ ТӐКНӐ: танксемпе хӑй тӗллӗн çӳрекен тупӑсем—216, тӗрлӗ калибрлӑ тупӑсем — 1.322, минометсем — 1.370, пулеметсем—3.660, автомашинӑсем—8.360. Çапӑçу хирӗнче тӑшман салтакӗсемпе офицерӗсен 50.000 виллине çити выртса юлнӑ.

Çав вӑхӑт хушшинчех БЕЛОРУССИРИ 1-мӗш фронт çарӗсем çакӑн пек трофейӑсем ТЫТСА ИЛНӖ: танксемпе хӑй тӗллӗн çӳрекен тупӑсем—150, тӗрлӗ калибрлӑ тупӑсем—1.342, минометсем—384, пулеметсем—3.744, винтовкӑсем—10.000, радиостанцисем—134, телефон аппарачӗсем—400, автомашинӑсем—7.562, тягачсем—215, çар хатӗрӗсем тиенӗ лавсем—4.300, тӗрлӗ пурлӑх тиенӗ эшелонсем—36, лашасем—7.748, боеприпас, хӗçпӑшал, снаряжени тата апат-çимӗç склачӗсем—263.

23.680 нимӗç салтакӗпе офицерне ТЫТКӐНА ИЛНӖ.

Çапла ӗнтӗ, БЕЛОРУССИРИ 1-мӗш фронт çарӗсем, ултӑ кун хушшинче тунӑ наступление пула (ÇАВ НАСТУПЛЕНИЛЛӖ ÇАПӐÇУСЕМ ТӐШМАНӐН БОБРУЙСК ХУЛИ ПАТӖНЧИ ГРУППИРОВКИНЕ ÇАВӐРСА ИЛСЕ ПӖТЕРСЕ ТӐКНИПЕ ТАТА БОБРУЙСК ХУЛИНЕ ИРӖКЕ КӐЛАРНИПЕ ВӖÇЛЕННӖ), нимӗçсем хӑйсен çар техникин чи кирлӗ хатӗрӗсемпе çыннисене çакӑн чухлӗ çухатнӑ: вилнисемпе тыткӑна лекнисем—73.680 çын, танксемпе хӑй тӗллӗн çӳрекен тупӑсем—366, тӗрлӗ калибрлӑ тупӑсем—2.664, минометсем—2.254, пулеметсем — 7.404, автомашинӑсем—15.922.

* * *

БЕЛОРУССИРИ 2-мӗш фронт çарӗсем, генерал-полковник ЗАХАРОВ командир пулса ертсе пынипе, кӑçалхи июнӗн 23-мӗшӗпе 29-мӗшӗ хушшинчи наступленилле çапӑçусенче тӑшмана çынсемпе техника тӗлӗшӗнчен çакӑн пек çухатусем кӳнӗ:

ПӖТЕРСЕ ТӐКНӐ: танксем—60, тӗрлӗ калибрлӑ тупӑсем — 250, минометсем—200, пулеметсем—500, автомашинӑсем — 3.150. Çапӑçу хирӗнче тӑшман салтакӗсемпе офицерӗсен 30.000 виллине çити выртса юлнӑ.

Çав вӑхӑт хушшинчех БЕЛОРУССИРИ 2-мӗш фронт çарӗсем çакӑн пек трофейӑсем ТЫТСА ИЛНӖ: танксем—20, тӗрлӗ калибрлӑ тупӑсем—161, минометсем—192, пулеметсем—560, винтовкӑсемпе автоматсем—9.100, автомашинӑсем — 3.000, паровозсем—3, вагонсем—120, лашасем—2.100.

3.250 салтака, 100 офицера ытла тата нимӗçсен 2 генералне—12-мӗш пехотнӑй дивизин командирне Бамлер генерал-лейтенанта тата Могилев хулин комендантне Эрдмансдорф генерал-майора ТЫТКӐНА ИЛНӖ.

Çапла ӗнтӗ, БЕЛОРУССИРИ 2-мӗш фронт çарӗсем, çичӗ кун хушшинче тунӑ наступление пула (ÇАВ НАСТУПЛЕНИЛЛӖ ÇАПӐÇУСЕМ ТӐШМАНА МОГИЛЕВ ХУЛИ ЕНЧЕ ПОРАЖЕНИ ТӲСТЕРНИПЕ ТАТА МОГИЛЕВ ХУЛИНЕ ИРӖКЕ КӐЛАРНИПЕ ВӖÇЛЕННӖ), нимӗçсем хӑйсен çар техникин чи кирлӗ хатӗрӗсемпе çыннисене çакӑн чухлӗ çухатнӑ: вилнисемпе тыткӑна лекнисем—33.250 çын, танксем—80, тӗрлӗ калибрлӑ тупӑсем—411, минометсем—392, пулеметсем—1.060, автомашинӑсем—6.150.

БЕЛОРУССИРИ 1-мӗшпе 2-мӗш фронт çарӗсен наступленийӗ вӑхӑтӗнче нимӗçсем хӑйсен çар техникин чи кирлӗ хатӗрӗсемпе çыннисене пӗтӗмпе çакӑн чухлӗ çухатнӑ: вилнисемпе тыткӑна лекнисем—106.930 çын, танксемпе хӑй тӗллӗн çӳрекен тупӑсем—446, тӗрлӗ калибрлӑ тупӑсем—3.075, минометсем—2.646, пулеметсем—8.464, автомашинӑсем — 22.072.

СОВИНФОРМБЮРО.

ОТЕЧЕСТВЕННӐЙ ВӐРÇА ГЕРОЙӖСЕМ

Пирӗн паттӑр земляк А. В. Кочетов вӑрçӑ пуçланнӑранпах фронтра. Вӑл — летчик-истребитель, тӑшманӑн 31 самолетне персе ӳкернӗ. Çапӑçусенче хастарлӑхпа геройлӑх кӑтартнӑшӑн ӑна Совет Союзӗн Геройӗ ятне панӑ. Ӑна ултӑ орденпа наградӑланӑ. Вӑл — Улатӑртан.

Укерчӗк çинче: Совет Союзӗн Геройӗ А. В. Кочетов.

Н. ДАНИЛОВ фотоӳкерчӗкӗ.

Шупашкар хули совечӗн сессийӗ

Çак кунсенче Шупашкар хули совечӗн сессийӗ пулса иртрӗ. Сесси икӗ ыйту сӳтсе-яврӗ: хулана юсаса илемлетесси çинчен тата организацилле ыйту.

Пӗрремӗш ыйту тӑрӑх хула совет исполкомӗн председателӗ Аникин юлташ доклад туса пачӗ. Вӑл хӑйӗн докладӗнче партипе правительство, вӑрçӑ вӑхӑтӗнчи йывӑрлӑхсене пӑхмасӑрах, хуласене юсаса илемлетессишӗн тимлӗн тӑрӑшнине палӑртрӗ. Çапла, 1943 çулта Шупашкар хулине юсама 414 пин тенкӗ расходланӑ пулсан, кӑçал вӑл ӗçе пурнӑçа кӗртме 616 пин тенкӗ уйӑрнӑ. Хулара йывӑçсем лартас тӗлӗшпе чылай ӗçсем тунӑ ӗнтӗ. План тӑрӑх 8.000 йывӑç лартмалла пулнӑ пулсан, хулари ӗççыннисем активлӑн пулӑшнипе 10.800 йывӑç лартса хӑварнӑ. Чылай урамсенче тротуарсем, газонсем тӑваççӗ. Уйрӑмӑн илсен, Ленинградски урама юсаса илемлетес тӗлӗшпе пысӑк ӗçсем тунӑ. Парксемпе садсене йӗркелес ӗçе тытӑннӑ.

Анчах хулана юсаса илемлетес тӗлӗшпе умра тата та пысӑк ӗçсем тӑраççӗха. Хулари чылай урамсем япӑхса кайнӑ. Сӑмахран, Кадыков урамӗ Атӑл хӗррине хула центрӗпе çыхӑнтарса тӑрать. Вӑл урампа çӳрекенсем нумай. Апла пулин те, çав урам япӑхса кайнӑ, иртсе çӳреме те йывӑр, мӗншӗн тесен ӑна юсасси çине чылай çулсем хушши çавӑрӑнса пӑхман. Ворошилов урамӗ, Коммунальная Слобода тата ытти чылай урамсем те çавӑн евӗрлех.

Предприятисемпе учрежденисем патне пымалли çулсенчен чылайӗшне тата пусмасене тӗпренех юсамалла. Çапла, Володарский урамӗнчи т. ыт. хӑшпӗр çӗрти пусмасем тӑрӑх çӳреме те хӑрамалла. Вӑхӑта вӑраха ямасӑрах çӑлсене, уйрӑмӑнах Заводской тата Учительски урамсенчи çӑлсене, юсамалла.

Атӑл хӗрринчи бульвара япӑхтарса янӑ. Газонсене ишӗлтернӗ, картасемпе саксене çӗмӗрсе пӗтернӗ. Чылай хӳмесене, алӑксене, тротуарсене юсамалла. Хулара тасалӑх тӑвас тӗлӗшпе нумай ӗçлемелле-ха.

Хулана юсаса лайӑхлатас тӗлӗшпе тумалли мӗнпур ӗçсене хӑвӑрт тата лайӑх туса ирттермелле. Вӑл ӗçе ӗççыннисене анлӑн явӑçтармалла.

Июнӗн 25-мӗшӗнче Шупашкарта хулана юсаса лайӑхлатас тӗлӗшпе уйӑхлӑх пуçланчӗ. Пир-авӑр тӗртекен фабрика коллективӗ хулари пӗтӗм ӗççыннисене çак кирлӗ ӗçе активлӑн хутшӑнма чӗнчӗ. Пир-авӑр тӗртекен фабрика коллективӗ хӑй çине илнӗ обязательствӑсене пурнӑçа кӗртме тытӑннӑ ӗнтӗ. Çак чӗнӗве пур предприятисемпе учрежденисен тата мӗнпур организацисен коллективӗсен те йышӑнмалла. Хулана юсаса илемлетес тӗлӗшпе вӗренекенсемпе килхуçи хӗрарӑмӗсем пысӑк пулӑшу пама пултараççӗ. Вӗсене ӗçе активлӑн явӑçтармалла.

Доклад тӑрӑх прениере Петров депутат, Баранова (ачасен 14-мӗш номерлӗ сачӗ), Львова депутат, Малиновская депутат, Сорокин (Горпромкомбинат), Варфоломеев (Водосвет), Мордкович (Академи театрӗ), Зекин (Милицин хула отделенийӗ), Бугаев (хула совечӗ) юлташсем тухса каларӗç.

Сессире ВКП(б) хула комитечӗн секретарӗ Романова юлташ сӑмах тухса каларӗ.

Сесси хулана юсаса илемлетес тӗлӗшпе тумалли ӗççене пӗтӗмпех тата лайӑх пахалӑхпа пурнӑçа кӗртме кирлӗ решени йышӑнчӗ.

Сесси И. Т. Братчиков юлташа, вӑл урӑх ӗçе куçнӑ май, хула совет исполком председателӗн пӗрремӗш заместителӗн ӗçӗнчен хӑтарчӗ.

Сесси хула совет исполкомӗн председателӗн пӗрремӗш заместителӗ пулма А. В. Киселев юлташа суйларӗ.

КОЛХОЗ УЙХИРĔСЕНЧЕ

Степанов бригади çулталăкри плана 125 процент тултарчĕ

ÇĔРПУ, июнĕн 29-мĕшĕ. (Телефонпа). МТС-ри тракторсем горючи пулманнипе [illegible] Степанов юлташ ертсе пыракан бригада тракторсемпе [illegible] планне 125 процент пурнăçларĕ. Çавăн пекех И. Гаврилов, В. Иванов, Ершов, Антонов трактористсем те хăйсен çулталăкри планĕсене [illegible] тултарчĕç.

Çĕртме тунипе пĕрлех, комбайнсемпе молотилкăсене юсас ĕçе те [illegible] пырать. Паянхи кун тĕлне 9 молотилкăран 6-шне юсанă, комбайнсен 5 моторне тĕрĕслесе юсанă [illegible] Октябрьски МТС-не парать. Комбайнсемпе молотилкăсене юсас ĕçре нумай хăвăртлăх тума пулать, анчах та кунта Канаш МТМ-ĕ [illegible] кунсенчех юсаса пĕтересрĕ.

М. АРЗАМАСОВ,
МТС директорĕ.

Колхоз утă çулма хатĕрленмен

МУРКАШ, июлĕн 1-мĕшĕ. (Телефонпа). Шурча ялсоветĕнчи «Самолет» колхоз утă çулас ĕçе [illegible] Июнĕн 30-мĕшĕ тĕлне колхоз 15 гектар утă çулса типĕтрĕ. [illegible] «Красная звезда» колхоз [illegible]

[illegible] Колхоз председателĕ Н. Григорьев, бригадир Г. Попов [illegible] 53 гектар [illegible] Кашни ĕçĕн хăйĕн вăхăчĕ пур. Ăна вăхăтра туса пымасан, паллах, пĕтĕм ĕçе чăрмалантарса пырать.

И. ГРИГОРЬЕВ.

Хĕрÿллĕ ĕçсем пуçланчĕç

Канашри районĕнчи колхозсем [illegible] çумлас ĕçе тăвас ĕçсемпе пĕрлех, хĕрÿллĕ ĕç утă çулма тытăнчĕç. Утă çулма районри 58 колхозран 25-шĕ пухнă. [illegible] «Броневик» колхоз 50 гектар [illegible] «Красноармеец» колхоз 30 гектар [illegible]

Пушкин ячĕпе тăракан колхоз 30 тонна, «Броневик» колхоз 70 тонна силос хывнă. [illegible] колхоз 29 центнер [illegible]

[illegible] «Первое мая» тата Пушкин ячĕпе тăракан колхозсем [illegible] «Броневик», «Первое мая» тата Киров ячĕпе тăракан колхозсем [illegible]

Ф. РОМАНОВ.

Çумкурăксене тĕппипех пĕтеретпĕр

Чурачăк районĕнчи Тĕрер ялсоветне кĕрекен «Пчеленко» колхозра çуртгырĕсем лайăх çитĕнеççĕ. Вĕсене [illegible] сенчен тасатсах тăратпăр. Çĕлĕ тата пăрçа акнă вырăнсене çумкурăксенчен пĕтĕмпех тасатрăмăр. Çум çумлас ĕçре [illegible]

кĕмĕш бригадăн 4 [illegible] кăнтарла вĕçленĕ [illegible] сарăлса пырать.

Г. ГАВРИЛОВ,
1-мĕш бригадăн бригадирĕ.

Агротехникăна пăсмалла мар

МУРКАШ. Районри колхозсем пиккенсех таса çĕртме тăваççĕ, анчах «Ильмень» тата «Красная Звезда» колхозсем çĕртме тăвас ĕçе тытăнман-ха.

«Ильмень» колхоз председателĕ Спиридонов юлташ çĕртме тăвас вырăнне: — Кракин та кÿрсе килтĕмĕр, Ишлей МТС-ĕнчен тракторсем тем тума килмеççĕ, — тесе ларать.

— Хăвăр лашăрсемпе мĕншĕн сухаламастăр, тесе ыйтсан: — Тислĕк кÿрсе ларатпăр, — тесе ответлет. Анчах тислĕкне те кунта пурĕ те 600 лав кăна тăкнă.

Çавăн пекех «Красная Звезда» колхозăн председателĕ Григорьев юлташ та çавăрăнăçусăр ĕçлет. Ку колхоз çуракине те вăраха тăсрĕ. Хĕлле çĕртме пуссине тислĕк тăкман пирки кунта та çав ĕçе халĕ тин тăваççĕ

Чылай колхозсенче çĕртме сухине сухаланă хыççăн çийĕнчех сÿрелемеççĕ. Агротехника мероприятийĕсене мĕнле пурнăçланине тĕрĕслесе тăма районра агрономсем çитмеççĕ. Халĕхи вăхăтра районĕпе те пĕр агроном кăна ĕçлет.

Ф. АЛБУТОВ.

Пахчаçă Кушков

Куславкка районĕнчи Партин 15-мĕш съезчĕ ячĕпе тăракан колхозри пахчаçа— Николай Кушкова пурте хисеплеççĕ. Иртнĕ çул вăл тăрăшнипе кашни гектартан вăтам шутпа 15.000 пуç купăста пухса илнĕ, кашни пуçĕ 3—5-шер килограмм туртатчĕ; кашни гектартан 20 тонна хăяр пухнă.

Кушков — пахча-çимĕç бригадин бригадирĕ. Вăл хăйĕн бригадипе пĕрле пахчара кунĕн-çĕрĕн, ывăнма пĕлмесĕр ĕçленĕ. Ĕçĕ сая кайман. Государствăна обязательство тăрăх парса татнă хыççăн, колхоз кооперации урлă 50 тонна купăста, 2 тонна хăяр сутнă. Кушков юлташ иртнĕ çул вăрлăхсем нумай пухса илчĕ.

Вăл пурĕ 190 гектар çине акмаллăх вăрлăх тунă. Кăçал та вăрлăхсем тума кирлĕ пек тымар-çимĕçсене лартнă.

Колхозăн парниксем нумай, парниксенче халь хăярсем çитĕнни.

— Кăçал иртнĕ çулхинчен лайăхрах ĕçлесе, пахча-çимĕç ытларах туса илесси шĕн ĕçлетпĕр, — тет Кушков юлташ. — Хĕрлĕ Çар çĕнтерĕвĕсем ĕçре вăй-хăват параççĕ, мĕнле те пулин ытларах ĕçлесе Хĕрлĕ Çар ретĕнчи тăван ывăлсене пулăшас килет.

Ватă патриотăн ĕçĕсем ытти колхозниксемпе колхозницăсене стахановла ĕçлеме хавхалантараççĕ.

И. ШАРКОВ.

Ĕ ç ч е н с т а р и к

КАЛИНИНО. Анат Карачурари «Социализм çулĕпе» колхозри 66 çулхи старик Степан Евграфов — икĕ фронтовикăн ашшĕ — колхозри чи ватă та чи ĕçчен çынсенчен пĕри шутланать.

— Нимĕнлĕ ĕçе те тиркемест çав Степан пичче, пурне те тирпейлĕ, лайăх тăвать, — теççĕ ăна ырласа колхозниксем.

Чăнахах та С. Евграфов хăйĕн пултаруллă ĕçĕсемпе ытти колхозниксенчен чылай малта тăрать. Пур ĕçе те юратса, ытти колхозниксене хавхалантармалла тăвать.

Иртнĕ ялхуçалăх çулĕнче, колхоз уйхирĕсенче ырми-канми ĕçлесе, вăл 400 ĕçкунĕ ытла турĕ, чылай тырă илчĕ.

Иртнĕ çулта С. Евграфов государствăна 20 пăт тырă сутрĕ, вăрçă заемне 22.000 тенкĕлĕх, укçапа япаласен лотерейине 1.000 тенкĕлĕх илчĕ.

С. Евграфов 1944 çулхи çуракине большевикла ирттерме хатĕрленес ĕçре те, хăйĕн ватăлăхне пăхмасăр, хĕрÿллĕн ĕçлерĕ. Вăл хăй пĕччен 12 лаша валли ут таврашĕсем юсаса е çĕнĕрен туса хучĕ. Кунсăр пуçне, Евграфов агрокружок руководителĕ пулса ĕçлерĕ, чылай хĕрарăмсемпе çамрăксене плугсен пайĕсене, ака вăхăтĕнче ĕç лашисене мĕнле тыткаламаллине вĕрентрĕ.

— Пирĕн мĕнпур хĕрÿллĕ ĕçсем тăшмана хăвăртрах çапса аркатма! Тăван çĕршыва пулăшчăр. Çавăнпа та эпĕ, хамăр колхозăн уйхирĕсенче фронтри пек ĕçлесе, кăçал 450 ĕçкунĕ тума сăмах паратăп, — терĕ вăл колхозниксен пĕр пухăвĕнче.

Б. ШОРНИКОВ.

Пăрлă Океан хĕрринче пахча-çимĕçсем ÿстереççĕ

Пĕлтĕр Дальстройăн Чукоткăри сăрт-ту управленийĕн агрономĕ Криворотов юлташ Пăрлă Океан хĕрринче пахча-çимĕçсем лартса тума пуçланă. Пĕчĕк теплица тунă та унта сухан, редис, çарăк лартса ÿстернĕ.

Кăçал вăл пысăках мар пулăшуллă хуçалăх тунă. Иккĕмĕш теплица туса хунă. Çав теплицăра хăярсем, помидорсем чечексене лартнă ĕнтĕ, сухан ешĕрсе ларать, чĕкĕнтĕр тата табак ÿсет. Нумаях пулмасть Криворотов юлташ редис пухса илнĕ. Халĕ, опыт тăвас йĕркепе, вăл уçă çĕртех йăрансем туса хунă, унта вăл кĕске çу вăхăтĕнче чĕкĕнтĕр, кишĕр, çарăк лартса ÿстерме шутлать. (ТАСС).

РЕСПУБЛИКА ТĂРĂХ

Ÿкерчĕк çинче: Канашри Н. А. Добролюбов ячĕпе тăракан педагогика училищин музыка преподавателĕ **П. Е. ЕГОРОВ** юлташ.

Вăл 59 çулта ĕнтĕ, учитель ĕçĕнче 40 çул хушши, Канашри педагогика училищинче 1923-мĕш çултанпа ĕçлет.

«СОВЕТ СОЮЗĔН ОТЕЧЕСТВЕННĂЙ ВĂРÇИН ВИÇĔ ÇУЛТАЛĂКĔ» ЯТЛА КĔНЕКЕ

Совет Информаци Бюровĕ «Совет Союзĕн Отечественнăй вăрçин виçĕ çулталăкĕ» çинчен пĕлтернине Чăвашсен государство издательстви вырăсла тата чăвашла уйрăм кĕнекесем туса кăларнă. Кашни кĕнекин тиражĕ — 10.000 экземпляр.

КОЛХОЗРИ СТРОИТЕЛЬСТВО

Красноармейски районри «Новое хозяйство» колхоз кăçал çĕнĕрен çĕрулми усрамалли склад тума, выльăх-чĕрлĕх витисене тĕпрен юсама палăртнă. Строительство ĕçĕсене пурнăçа кĕртме унта уйрăм бригада организациленĕ. Бригада ĕçе тытăннă ĕнтĕ.

ИРĔКЕ КĂЛАРНĂ РАЙОНСЕМ ВАЛЛИ — КĔНЕКЕСЕМ

Куславкка районĕнчи пионерсемпе вĕренекенсем хушшинче ирĕке кăларнă районсенчи шкулсем валли кĕнекесем пухасси сарăлса пырать. Паянхи кун тĕлне 300 кĕнеке ытла пухнă.

ШЫВ ВАЙĔПЕ АВАН ÇАПМА ХАТĔРЛЕНЕÇÇĔ

Вăрнар районĕнчи «Ударник» колхозра молотилкăна шыв вăйĕпе ĕçлеттерме хатĕрленеççĕ. Молотилкăна юсаса çитернĕ, халĕ ытти оборудованисене тăваççĕ. Çак ĕçре М. Кузнецовпа Ф. Васильев машиноведсем тăрăшса ĕçлеççĕ.

СУДОВЕРФЬРИ СТАХАНОВЕЦСЕНЕ НАГРАДĂЛАНИ

СССР Тинĕс Флочĕн Халăх Комиссарĕ Ф. П. Ширшов юлташ тинĕс флочĕн хăватне тĕреклетессишĕн хастарлăн ĕçленĕ рабочисемпе инженерла-техникла работниксене Хисеплĕ грамотăсемпе наградăланă. Вĕсем хушшинче Сĕнтĕрвăррипчи судоверьфри стахановецсем Н. Лебедев, А. Харитонов, Б. Войнов, Ю. Шевнин, А. Лебедева, Н. Гордеев тата С. Колчина юлташсем те пур.

Партипе совет органĕсен çулйĕр ĕçне куллен ертсе пымалла

ИШЛЕЙ. Çулйĕр уйăхлăхĕ пуçланнăранпа чылай вăхăт иртрĕ ĕнтĕ. Уйăхлăх вăхăтĕнче Ишлей районĕн Шупашкар — Вăрнар çулĕ çинче 1.095 кубометр çĕр ĕçĕ тумалла, 354 кубометр йывăç, 1.344 кубометр хăйăр турттармалла. Çак ĕçре куллен çуранпасем 414 çын, лашапа 185 çын ĕçлемелле. Кунсăр пуçне Ишек патĕнчи кĕпере юсама 44 çын тухмалла.

Уйăхлăх вăхăтĕнче тумалли ĕçсем чылай. Вĕсене пĕтĕмĕшпех те лайăх пурнăçа кĕртес тесен, çулйĕр организацийĕсем тата партипе совет органĕсем çулйĕр ĕçне большевикла ертсе пыни кирлĕ. Анчах Ишлей районĕн руководителĕсем ĕç хăй тĕллĕн пулса пырассине шанса лараççĕ.

Чăн та, çулйĕр строительстви планне кашни колхозпа ялсовет патне çитернĕ. Анчах ĕçе тытăннине тĕрĕслесе тămaççĕ. ВКП(б) райкомĕн иккĕмĕш секретарĕ Сазонов юлташ та районра çулйĕр ĕçĕ мĕнле пыни çинчен пĕлмест. Çапла ĕçе ертсе пыманнине пула ĕнтĕ, районри чылай колхозсем çулйĕр тума тытăнман та. Сăмахран, Çĕньял Покровски ялсоветĕнчи 5 колхозран пĕр Пархикасси колхозĕ кăна тухнă. Чурачăк, Етĕрнекасси, Ишек тата ытти чылай ялсоветсем çак ĕçе пăчах пуçăнман. Районран çул çинче кунсерен 414 çын ĕçлемелле пулсан, кунта 70—92 çын кăна ĕçлет.

Çулйĕр строительстви планне ăнăçлăн тултарас тесен, пĕтĕм ĕçе тивĕçлипе организацилемелле.

З. МИТРОФАНОВА.

Танксемпе самолетсем тума

КУСЛАВККА. Районри учрежденисемпе предприятисенче ĕçлекенсем, Хĕрлĕ Çар валли боевой машинăсем тума нумайрах укçа-тенкĕ пухас тесе, канмалли кун воскресник туса ирттерчĕç. Унта пĕтĕмпе 250 çын хутшăнчĕ. Вĕсем цемент заводĕ патне чугун çул линийĕ илсе пыма 570 кубометр çĕр чаврĕç, 500 метр тăршшĕ чугун çул рельсĕ хывмалăх вырăн хатĕрлерĕç. Воскресникре ĕçлесе илнĕ укçана пĕтĕмпех Хĕрлĕ Çар валли боевой машинăсем тунă çĕре панă.

Воскресникре уйрăмăнах государство банкĕн районри отделенийĕн, ача сачĕн тата Карачури скипон работникĕсем хастарлă ĕçленине палăртмалла. Комсомолăн «Динамо» колхозри пуçламĕш организацийĕ (секретарĕ Абуков юлташ) воскресника лайăх йĕркеленĕ.

И. ШАРКОВ.

Çурçĕр Францири вăрçă ĕçĕсем

Союзниксен экспедициллĕ вăйĕсен верховнăй командованийĕн штабĕ пĕлтернисем

ЛОНДОН, июнĕн 29-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен экспедициллĕ вăйĕсен верховнăй командованийĕн штабĕ июнĕн 29-мĕшĕнче панă каçхи пĕлтерÿре çапла каланă:

«Тилли-сюр-Сель тата Кан хули патĕнчи йывăр çапăçусем хыççăн, пирĕн çарсем Одон шывĕ урлă каçса хăйсем йышăннă районри позицисене çирĕплетнĕ. Пирĕннисем Мондренвильпе Турвиль районĕнче çавăрса илнĕ тăшман çарĕсене пĕтерсе тăкнă. Пирĕннисем шала кĕрсе кайса йышăннă позицие хирĕç тăшман тунă контратакăсене татăклăн сирсе янă. Кан хулинчен çурçĕртерехре союзниксен çарĕсем, тăшман хаяррăн хирĕç тăнине пăхмасăрах, каштах малалла кусна. Аг сăмсахĕн районĕнче çаплах çапăçусем пыраççĕ.

Нормандие пырса кĕнĕренпе пирĕн çарсем нимĕçсен 121 йывăр танкне пĕтерсе тăкнă.

Çанталăк çăра тĕтреллĕ пулни тата тинĕс çинче тăвăл тухни июнĕн 29-мĕшĕнче ирхине пирĕн авиацин ĕçĕсене чăрмантарнă».

* * *

ЛОНДОН, июнĕн 30-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен экспедициллĕ вăйĕсен верховнăй командованийĕн штабĕ паян ирхине пичетлесе кăларнă пĕлтерÿре çапла каланă:

«Союзниксен Одон шывĕ районĕнчи укрепленине икĕ флангра та сарса аслăлатнă. Фронтăн ытти участокĕсенче лару-тăру улшăнман. Оверси пунктĕнчен çурçĕртерехре çапăçусем малалла пулса пынă. Тăшман ку района çĕнĕ çарсем куçарса килнĕ. Шербур молĕнчи фортсем паранна. Де-ла-Ав сăмсахĕ районĕнчи территорие тăшмантан тасатса пыраççĕ.

Июнĕн 29-мĕшĕнче кăнтăрла иртсен тата каçхине союзниксен авиацийĕ тăшманăн фронт линийĕ лешьенчи чугун çулĕсемпе автомобиль транспорчĕсене, кĕперĕсемпе поезчĕсене тата çулсен узелĕсене пыра-пыра тапăннă».

* * *

ЛОНДОН, июнĕн 30-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен экспедициллĕ вăйĕсен верховнăй командованийĕн штабĕ июнĕн 30-мĕшĕнче каçхине панă пĕлтерÿре çапла каланă:

«Кан хули секторĕнче союзниксен çарĕсем çаплах Орн шывĕ патнелле куçса пынă. Çакна пула тăшман çапăçăва хăйĕн бронетанковăй вăйĕсен пысăк резервĕсене кĕртсе янă, вăл пире малалла куçма чарма хăтланать. Нимĕç чаçĕсем темиçе хутчен те контратакăсем тунă, çапах та эпир хамăр позицисене паман кăна мар, самаях лайăхлатнă. Кунтан хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем Сен-Жан-Де-Дей районĕнче каштах малалла куçнă. Котантен çурутравĕ çинче тăшман Аг сăмсахĕ районĕнче çаплах хирĕç тăрать-ха.

Çанталăк начар тănипе июнĕн 30-мĕшĕнче кăнтăрлаччен пирĕн авиаци вăйлăрах кĕрешме пултарайман. Анчах та кăнтăрла иртсен çанталăк юсаннă та, союзниксен авиацийĕ çапăçусен районĕнче тата ку районран кăнтăртарахра 1.000 вĕçев тунă.

ФРАНЦИРЕ РЕСПУБЛИКА ЗАКОНĔСЕНЕ ÇĔНĔРЕН ПУРНĂÇА КĔРТМЕЛЛЕ ТУНĂ

АЛЖИР, июнĕн 27-мĕшĕ. (ТАСС). Франс-Африк агентстви çапла пĕлтерет: Французсен консультаци ансамблейи, кĕске вăхăт хушши сÿтсе-явнă хыççăн, пурте пĕр саслă пулса, Франци территорийĕнче республика законĕсене çĕнĕрен пурнăçа кĕртмелли çинчен калакан указăн проектне йышăннă. Çав указ тăрăх, Виши «правительствин» пур законĕсем те пăрахăça тухаççĕ, çав суя правительствăн пур акчĕсем те пĕтсе лармалла.

ПАРИЖРА ВИШИ «ПРАВИТЕЛЬСТВИН» «ПРОПАГАНДА МИНИСТРНЕ» ФИЛИПП АНРИОНА ВĔЛЕРНĔ

ЖЕНЕВА, июнĕн 28-мĕшĕ, (ТАСС). Гитлер агентстви — Германин информаци бюровĕ çапла пĕлтернĕ: паян ирхине Парижра Виши «правительствин» «пропагандăпа информаци министрне» Филипп Анриона вĕлернĕ. Филипп Анрио Виши «правительствин» Сена шывĕ хĕрринчен инçех те мар ларакан çуртĕнче пулнă. Çав çурт патне автоматсемпе хĕçпăшалланнă çынсем автомобильпе пырса чарăннă. Вĕсем çав çурта сыхлакан икĕ полицейские хĕçпăшалсăрлантарнă. Çав çынсенчен виççĕшĕ вара Анрио пулнă пÿлĕме кĕрсе кайнă та ăна çавăнтах персе пăрахнă.

Кунта çакăн çинчен каласа кăтартаççĕ: Филипп Анрио Гитлерăн чи тĕрĕс, уншăн чи тăрăшакан тарçисенчен пĕри пулнă. Вăл нумаях пулмасть Геббельс чĕннипе Берлина кайнă, унта вăл гитлеровецсен пуçлăхĕсемпе нумайĕшĕпе курса калаçнă.

Дитль генерала вĕлернĕ

СТОКГОЛЬМ, июнĕн 30-мĕшĕ. (ТАСС). Тĕрлĕ тĕлтен пĕлтернĕ тăрăх, Çурçĕр Финляндире Гитлер çарĕсен командующине Дитль генерал-полковнике вĕлернĕ.

Хэлл калани

ЛОНДОН. июнĕн 29-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентствин Вашингтонри корреспонденчĕ пĕлтернĕ тăрăх, США государственнăй секретарĕ Кордэлл Хэлл июнĕн 29-мĕшĕнче пресс-конференцире çапла каланă: халĕ Финляндипе Америка хушшинчи çыхăнусене татас пирки тăракан ыйтăва пăхса тухаççĕ, тенĕ. Америка ĕçĕсен повереннăйĕ Гэллион халлĕхе Хельсинкирех пурăнать-ха, тенĕ Хэлл. Гэллион — Америкăн хальхи вăхăтра Финляндире юлнă юлашки дипломачĕ.

Финляндирен килекен хыпарсем

ÇАВ ХЫПАРСЕМ ÇИНЧЕН ФИНЛЯНДИ ПРАВИТЕЛЬСТВИН ПРЕССИ ШАРЛАМАСĂР ТĂРАТЬ

СТОКГОЛЬМ, июнĕн 29-мĕшĕ. (ТАСС). Финсен вăрттăн радиостанцийĕ пĕлтернĕ тăрăх, Финляндире саботажла тата диверсиллĕ ĕçсем вăйлăнрах та вăйлăнрах сарăлса пыраççĕ. Çав ĕçсене финсем Финлянди правительствин вăрçă политикине хирĕç тăваççĕ. Çапла, сăмахран, июнĕн 12-мĕшĕнче, Тампере хулинчен 25 километрта ларакан Лемяяля станци çывăхĕнче çар материалĕсем тиенĕ поезда ÿпĕнтерсе янă. Çав кунах «Вяйнемейнен» ятлă çар карапне пысăк сиен кÿнĕ. Çав карап Хельсинки çывăхĕнчи утравсем çывăхĕнче тăнă пулнă.

Полицейскисемпе шюцкоровецсем правительство ĕçĕсене критиклеме хăякансене пурне те пĕр хĕрхенмесĕр тыта-тыта хупма приказ илнĕ. Халĕ тата çакă та паллă пулса тăнă: Финлянди охранки хăйĕн шпионĕсем пулма хĕрарăмсене лотта ятлă фашистла организацие йышлăн явăçтарать. Кашни лоттăна паллă çынсемпе вĕсен çемьисен пурнăçĕпе ĕçĕсене сăнаса тăма тата вĕсем çинчен полицие пĕлтерме хушнă. Çав хĕрарăм-шпионкăсене малтанах çакăн çинчен асăрхаттарса хураççĕ: пĕрпĕр çынна айăпламалли кирлĕ материала памасан, вĕсене хăйсене айăплаççĕ. Çав мероприяти лотта членĕсене хăйсене те питĕ тарăхтарса янă.

ФИНЛЯНДИПЕ ГЕРМАНИ ПĔР-ПĔРИНПЕ ÇĔНĔРЕН КАЛАÇСА ТАТĂЛАС УМĔН МĔН ПУЛСА ИРТНĔ

СТОКГОЛЬМ, июнĕн 29-мĕшĕ. (ТАСС). Швецире тухакан хаçатсем халь Финлянди Германипе килĕшÿ тăвас умĕн мĕн пулни çинчен çыраççĕ. «Моргон-тиднинген» хаçат çапла çырать: «Вырăссем Карели перешеекĕнче фронта кĕтмен çĕртен татса кĕнĕ хыççăнах политикăпа çар руководстви вырăссемпе мир тума кирлине ăнланса илнĕ пек туйăнатчĕ. Çавăн чухне Мускавпа мĕнле майпа çыхăнса килĕшме пурри çинчен Рюти правительствипе Маннергейм пĕр-пĕринпе нумай калаçнă. Маннергейма çĕршыва политика енчен ертсе пыма сĕннĕ. Рютийĕн вырăнтан тухмалла пулнă, Маннергеймăн вара регент пулса тăмалла пулнă. Анчах Маннергейм регент пулма килĕшмен, Вальден генерал премьер-министр пулма килĕшмен. Президентпа çар руководителĕсен кандидачĕ Рамсай пулнă. Сеймри фракцисене çакăн пек пĕлтернĕ: Финлянди вĕçне çитиччен Германи майлă кĕрешме тăрăшни çинчен Финлянди правительстви уççăнах каласа парсан, Германи Финляндие çар ярса пулăшать, Риббентроп çавăн пек шантарса къларĕ, тенĕ. Сейм ларăвĕ вара, — тесе çырать малалла хаçат, — çав каçах пулса иртнĕ, анчах та унта правительствăн пĕр членĕ те пыман. Çакăн хыççăн вара Сейм хăйне систермесĕр правительство нимĕçсемпе килĕшÿ тунине ăнланса илнĕ».

«Дагенс нюхетер» хаçатăн корреспонденчĕ çапла çырать: «Июнĕн 27-мĕшĕнче каçхине Хельсинкире Маннергейм урамĕпе Хельсинкине тин çеç килнĕ салтаксем, танксем, обозсен колоннисем куçса пычĕç. Ку вăл — нимĕç салтакĕсем, анчах та вĕсем суйласа илнĕ лайăх çарсем мар. Вĕсене таçтан-таçтан пухнă пек туйăнать. Унта — çамрăккисемпе стариксем, ывăннăскерсем, асапланса пĕтнĕскерсем. Паллах ĕнтĕ, танксемпе тупăсем юсавлă та йĕркеллĕ. Анчах обоз... вăл вара полякçемпе вырăссен ялĕсенче тытса илнĕ ахаль лавсенченех тăрать. Вĕсене халран кайнă пĕчĕк лашасем туртса пыраççĕ. Хельсинкире пурăнакан çынсем хăйсем хушшинче çапла калатчĕç: Гитлер çарĕ 4 çул каялла капла марччĕ, тетчĕç. Çарсем тиенĕ транспорт суднисем Прибалтикăран килнĕ курăнать. Нимĕçсен пулăшăвне кунта пĕр хавхаланмасăр йышăнчĕç. Риббентроп Хельсинкире тĕлĕнмелле нумай пурăнчĕ. Вăл Хельсинкине июнĕн 22-мĕшĕнче килчĕ те 4 кун пурăнчĕ. Сеймăн пысăкрах пайĕ, урăхла каласан, 200 депутатран 110-шĕ, правительствăна хирĕç пынине пĕлсе, правительство июнĕн 26-мĕшĕнче Сеймăн хупă пухăвĕнче ăна отчет туса пама шутланине пурнăçа кĕртмен».

Госсортфондăн Чăваш республикинчи конторине конторăра, межрайсембазăсенче тата хатĕрлев пункчĕсенче ĕçлеме çакăн пек работниксем кирлĕ: старши агроном, главнăй бухгалтер, межрайсембазăсен агрономĕ, старши бухгалтерсем, пунктсен заведующийĕсем, лаборантсем-счетоводсем.

Çак адреспа ыйтса пĕлмелле: гор. Чебоксары, ул. Набережная Волги, 13.

Чăваш республикинчи Заготживконторăна çакăн пек работниксем кирлĕ: секретарь-машинистка, зоотехниксем, бухгалтерсем, рабочисем тата сторожсем.

Çак адреспа ыйтса пĕлмелле: гор. Чебоксары. Учительская, 39.

Чăвашсен ялхуçалăх институчĕ агрономипе зоотехника факультечĕсен 1-мĕш курсне вĕренме илесси çинчен пĕлтерет.

Института вăтам шкултан вĕренсе тухнă çынсене — физикăпа, химипе, вырăс чĕлхипе тата литературăпа испытани лайăх тытнисене илеççĕ. 1943—44-мĕш çулсенче вăтам шкултан отличник пулса вĕренсе тухнисене института испытанисĕрех илеççĕ.

Заявленисене сентябрĕн 1-мĕшĕччен йышăнаççĕ. Вĕренме кĕмелли испытанисем сентябрĕн 1-мĕшĕпе 20-мĕшĕ хушшинче пулса иртеççĕ.

Заявленипе пĕрле çак документсене ямалла: мĕн чухлĕ вĕреннине кăтартакан свидетельство тата автобиографи.

Заявленисене çак адреспа ямалла: гор. Чебоксары, ул. Волгостроя, 4, Сельхозинститут, в приемную комиссию. 3—3

„Çар историйĕнче халиччен пулман хăвăртлăх"

АНГЛИН РАДИООБОЗРЕВАТЕЛĔ ХĔРЛĔ ÇАР НАСТУПЛЕНИЙĔ ÇИНЧЕН КАЛАНИ

ЛОНДОН, июнĕн 30-мĕшĕ. (ТАСС). Лондонри радион обозревателĕ Флеминг çапла каланă: Хĕрлĕ Çарăн наступленине уйрăмах палăртса тăракан паллă вăл — хăвăртлăх.

Германи халăхĕ, тет Флеминг, пĕрĕксĕрех çапла ыйтать: мĕн пулчĕ капла, Хĕвелтухăç фронтĕнче мĕнле çав тери пысăк улшăну пулса тăчĕ вара? — тет. Вырăс çарĕсем калама çук хăвăрт малалла куçса пыраççĕ, вĕсем мĕнле куçса пынине асăрхаса юлма та йывăр. Германи командующийĕсем наступлени тăвакан вырăс çарĕсене чармашкăн фронта хăйсен çарĕсене илсе пыма та ĕлкĕреймеççĕ. Вырăссен пехотипе танкĕсем кунне 20—30-шар миля каяççĕ, çар историйĕнче кун пек хăвăртлăх халиччен пулман.

КАНАДАРИ ХАÇАТСЕМ ХĔРЛĔ ÇАРĂН НАСТУПЛЕНИЙĔ ÇИНЧЕН МĔН ÇЫРАÇÇĔ

ОТТАВА, июнĕн 30-мĕшĕ. (ТАСС). Хĕрлĕ Çар наступлени туни çинчен пĕлтернисене тата çав пĕлтерÿсем пирки çырнисене Канадăри хаçатсенче союзниксен çарĕсен Францири ĕçĕсем çинчен пĕлтернисемпе пĕрлех чи курăнмалли вырăнта пичетлеççĕ.

Оттавăра тухакан «Ситизен» хаçат шухăшĕпе, Хĕрлĕ Çарăн хальхи çĕнĕ хăватлă наступленийĕ ăнăçлăн вăйланса пыни унăн çапăçас шухăш-кăмăлĕсем питĕ вăйлине кăтартса парать, ăна питĕ чаплă генералитет ертсе пырать.

«Монреаль хаçачĕ» каланă тăрăх, Хĕрлĕ Çар Отечественнăй вăрçă виçĕ çул тултарнине «чи çăмăл чĕлхепе, нимĕçсем питĕ лайăх ăнланакан чĕлхепе» палăртрĕ. Хĕрлĕ Çарăн хальхи наступленийĕ союзниксем Тегеранра пĕрле тума шухăшласа хунă наступленин пайĕ пулса тăрать.

Италири вăрçă ĕçĕсем

ЛОНДОН, июнĕн 30-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Италири çарĕсен штабĕ çапла пĕлтерет: Тразимен кÿллинчен хĕвелтухăçнерехре тата хĕвеланăçнерехре тăшман арьергардри позицисенче хирĕç тănине çĕмĕрсе, союзниксен Италири çарĕсем кÿлĕрен хĕвеланăç еннелле куçнă.

5-мĕш армин чаçĕсем анлă фронтра хăвăрттăн малалла куçнă та халĕ Италин хĕвеланăç çыранĕнчи Ливорно хулинчен кăнтăртарахра ларакан Чечино патнелле çывхарса пыраççĕ. Хальхи вăхăтра 5-мĕш армин чаçĕсем Сиенăран 28 километр кăнтăртарахра тăраççĕ. Çырантан шаларахри вырăнта 8-мĕш армин чаçĕсем, малтанхи пехех çÿреме йывăр вырăнсенче çапăçса, чылай малалла куçнă та Кастельоне дель Лаго хулине туртса илнĕ. Çав хулана нимĕçсем нумай кунсем хушши вăйлăн хÿтĕлесе тăнă пулнă. Кунсăр пуçне Тразимен кÿллинчен хĕвеланăçнерехре ларакан Монтепульчано хулине тата унтан хĕвеланăçнерехри чылай ялсене йышăнса илнĕ.

Ĕнер союзниксен самолечĕсем тăшманăн Италири тата Югославири объекчĕсене вĕçсе пыра-пыра тапăннă.

Союзниксен авиацийĕн ĕçĕсем

ЛОНДОН, июнĕн 30-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви çапла пĕлтерет: Америка авиацийĕ июнĕн 29-мĕшĕнче Çурçĕр Францире, Реин хулинчен 10 мильăра ларакан Комбур хулинчен пуçласа Аррас патне çитиччен сарăлса выртакан анлă участокра, чугун çул линийĕсем çине пыра-пыра тапăннă. Кунта кĕперсем, сортировка тăвакан станцисем, пĕвесем тата таварлă поездсен составĕсем çине бомбăсем пăрахнă.

ЛОНДОН, июнĕн 29-мĕшĕ. (ТАСС). Официально йĕркепе çапла пĕлтернĕ: союзниксен 1.500 е 2000 самолечĕ паян ирхине Вăтаçĕр Германири 4 авиаци заводĕ çине тата чылай хуласенчи ытти нумай паха сооруженисем çине бомбăсем пăрахнă.

ТĂШМАНĂН ПРЕСТУПЛЕНИЙĔСЕНЕ ЙĔРЛЕСЕ ТĔРĔСЛЕМЕ КОМИССИ ТУНĂ

АЛЖИР, июнĕн 30-мĕшĕ. (ТАСС). «Журналь офисьель» хаçатра француз влаçĕсен декретне пичетлесе кăларнă. Çав декрет тăрăх, тăшманăн вăрçă вăхăтĕнчи преступленийĕсене йĕрлесе тĕрĕслеме междуведомственнăй комисси тунă.

ДЬЮИ — США ПРЕЗИДЕНТНЕ СУЙЛАМА ТĂРАТНĂ КАНДИДАТ

ЧИКАГО, июнĕн 28-мĕшĕ. (ТАСС). Кунта июнĕн 26-мĕшĕнче республиканецсен партийĕн съезчĕ уçăлнă. Çак съезд Нью-Йорк штачĕн губернаторне Томас Дьюине республиканецсен партийĕнчен США президентне суйлама кандидата тăратнă. США вице-президентне суйлама Огайо штачĕн губернаторне Брикера кандидата тăратнă.

КĔСКЕН

Мексикăра хаваслă вечер пулса иртнĕ. Ку вечера Совет Союзĕн Отечественнăй вăрçи виçĕ çул тултарнă ятпа туса ирттернĕ. Илемлĕ искусствăсен дворецĕн залне темиçе пин çын пухăннă. Трибуна çинче Совет Союзĕн, США-н, Великобританин тата ытти пĕрлешÿллĕ нацисен дипломати представителĕсем пулнă.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

ШУПАШКАРТИ КИНОТЕАТР

паянтан, июлĕн 2-мĕшĕнчен, пуçласа кунсеренех

«М О Н Г О Л И Я»

ятлă илемлĕ çĕнĕ фильм кăтартать.

Сеанссем çак вăхăтра пуçланаççĕ: 12, 14, 16, 18, 20, 22 сехетре.

Билетсене ирхине 10 сехетрен пуçласа сутаççĕ.

Шупашкарти эрех комбинатне уполномоченнăйсем тата районсенче сад çимĕçĕсемпе çырласем хатĕрлекен агентсем кирлĕ. Çак адреспа ыйтса пĕлмелле: гор. Чебоксары, ул. Коммунальная Слобода, 21. Телефон 1—73.

Чăваш АССР-ĕн прокуратурине ялан ĕçлеме икĕ конюх-рабочи тата машинистка кирлĕ. Конюхсене пÿлĕм параççĕ. Çак адреспа ыйтмалла: гор. Чебоксары, Красная площадь, 26, 3-й этаж, комната № 6.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0— 67, заместительпе секретарĕн — 4— 26, парти пурнăç пайĕн — 3—99, промышленноçпа ялхуçалăх пайĕсен 5—31, издательство конторин —0—23.

НТ 00232 Типография №1, Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Заказ №2 ф. б. 59Х42 п. д. Тираж 14.400 экз.